41-165



# ПИРĔН ВĂХĂТРИ ЧАПЛĂ ЛЕТЧИК

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*



Валерий Павлович Чкалов. 1937 ç.

СОВЕТ СОЮЗĔН
ГЕРОЙĔ
ВАЛЕРИЙ ПАВЛОВИЧ

# ЧКАЛОВ

*Биографиллĕ
очерк*



I

„Эпĕ самолет штурвалне мĕн вăй пĕтсе ҫитиччен тата куҫпа ҫĕре курми пуличчен аларан вĕҫертмĕп",—тесе калана пĕррехинче Чкалов Сталин юлташа.

Вăл вара ҫак тупа туса калана сăмаха тӳрĕ кăмăлпа пурнăҫларĕ. Вăл хăйĕн пурнăҫне вĕҫне ҫитиччен тăван ҫĕршыва пачĕ, самолет штурвалне вăл хăйĕн геройла пурнăҫĕ мĕн вĕҫлениччен аларан вĕҫертмерĕ.

Чкалов тройки Сталинла маршрутпа—Мускав—Удд (халĕ Чкалов) утравне ăнăҫлăн вĕҫсе ҫитсе историллĕ вĕҫев туна хыҫҫăн, Сталин юлташ тата унăн соратникĕсем Чкалов, Байдуков тата Беляков ячĕпе яна телеграммăра ҫапла ҫырнă:

„Сирĕн паттăрлăхпа, чăтăмлăхпа, мастерлăхпа, хастарлăхпа тата ҫирĕплĕхпе мухтанатпăр".

Чкалов сăнлăхĕнче паттăрлăх, тимĕр пек чăтăмлăх, тимлĕхпе мастерлăх пĕтĕҫсе тăрать. Шăпах ҫавăн пек сăнланса тăрать те ĕнтĕ Совет Союзĕнчи халăхсен ăстăнĕнче пирĕн вăхăтри аслă летчик, Совет Союзĕн Геройĕ—Валерий Павлович Чкалов.

Халăхăн шанчăклă ывăлĕ, Ленин—Сталин партийĕн воспитаннийĕ Валерий Чкалов халăх геройĕн чăн-чăн символĕ пулса тăчĕ. Мĕнпур малта пыракан этемлĕх унăн паттăрла ĕҫĕсемшĕн алă ҫупрĕ.

Чкаловăн кашни вĕҫевĕ тăван ҫĕршыва нихăҫан манăҫа тухми мухтав кӳчĕ, авиацине пуян опыт пачĕ, этемлĕхшĕн ҫутăлса

тăракан инçетри тата тӳпери çулсене уçса пачĕ. Валерий Чкалов хăйĕн хĕрлĕ çунатлă кайăкĕпе çĕнĕ вырăнсене çĕнсе илсе пирĕн тăван çĕршывăн вĕçĕ-хĕррисĕр талкăшĕ тăрăх вĕçсе çӳрерĕ. Вăл пĕрре улăпла сикнипех икĕ аслă материк хушшинче—Совет Союзĕпе Çурçĕр Америка хушшинче аслă çул хыврĕ.

Совет авиацин историне Чкалов сахал мар чаплă страницăсем çырса кĕртрĕ.

Чкалов авиаци валли çуралнă çын. Вăл высший пилотажа йăлтах вĕренсе çитнĕ, вĕçсе хăпарас тата анса ларас тĕлĕшпе мастер пулнă, вĕçев искусствин никамран лайăх виртуозĕ пулнă. Калама çук чăтăмлă натура, çутçанталăк пӳрнĕ талант, хăравçăсăрлăх, чăтăмлăх тата чи йывăр положенинчен хăвăрт та тĕрĕс тухма пĕлни—çаксем вĕсем пурте Чкалова пӳрнĕ пахалăхсем.

Чкалов пурнăçăн йывăр шкулĕ витĕр тухнă.

Вăл 1904 çулта Атăл хĕрринчи Василево слободара, котельщик пулса ĕçлекен Павел Чкалов çемьинче çуралнă. Павел Чкалов çемьинче ывăл ача çуралсан, кӳршĕсем ашшĕпе амăшне саламлама пынă, Павел Чкалов вара, ахаль чухне сăмах ваклама юратманскер, ун чухне:

— Маттур ывăл пулать,—тенĕ.

Вăл йăнăшман: ачи çирĕп ӳснĕ.

Тăван Атăл хĕрринчи ирĕклĕ пурнăç, тем те пĕр курса хăюллăн выляса çӳренисем—çаксем пурте пулас пилота воспитани илме пулăшнă.

Ăшă кунсем çитсе килсен Валерий иртен пуçласа каçченех Атăл хĕрринчен татăлма пĕлмен—шыва кĕнĕ, хăйăр çинче выртса хĕвелпе пиçнĕ. Вăл анлă Атăлăн вĕçĕ-хĕррисĕр талккишĕнче инçете-инçете ишсе кайма юратнă,—шыв „тĕпне çитес" тесе чăмнă, шыв çинче шавлă вăйăсем пуçарса янă.

Сывлăхĕ çирĕп пулнă ун, шыв тĕпĕнче нумайччен тăма пултарнă вăл—сулă айне чăмса кĕрсе хĕрĕх пĕрене таран шутласа тухиччен çиеле тухмасăр чăтса тăнă.

Хĕлле вара Чкалов кунĕ-кунĕпе йĕлтĕрпе çӳренĕ. Вăл Атăл хĕрринчи чăнкă çырантан яп-яка шăннă пăр çине çил пек вĕçсе ярăнса анма юратнă. Уншăн чăнкă çыран та, хаяр сивĕ те хăрушă пулман. Ывăннине пĕлмен вăл, алли-урисем шăнса хытсан тин килне таврăннă.

Валерий ачаран тĕреклĕ, патмар ӳснĕ, унăн вăйĕ çулне кура мар пулнă.

Василево слободинчи ачасем час-часах çапăçнă, пĕр-пĕрин çине хӳме пек пынă. Вĕсем икĕ ушкăна: „пасар патĕнчисем" тата „сăртрисем" çине пайланнă. Валерий сăрт çинче, Атăл хĕрринче пурăннă, çавăнпа вĕсене „сăртрисем" тенĕ. „Сăртрисем" „пасар патĕнчисем" çине кĕтӳпе тапăннă. „Сăртрисем" хушшинче Валерий чи кĕçĕнни, апла пулин те вăл чи паттăрри пулнă. Вăл çапăçăва пуçне каçăртса никамран хăрамасăр кĕрсе кайнă.

Шыва кĕнĕ çĕрте, йĕлтĕрпе ярăннă чухне, ухутана кайсан, е пулă тытнă çĕрте—ачасен пур вăййисенче те ушкăнăн пуçлăхĕ Валерий хăй пулнă.



Валерий Павлович Чкалов. 1938 ç.

Валерий çичĕ çулта чухне ялти шкула кайнă. Вăл тăрăшса вĕреннĕ, анчах хăйне хăй тыткалас тĕлĕшпе вăл нихăçан та тройкăран мала илеймен. Ялти шкултан вĕренсе тухсан вăл Череповецри ремесленнăй училищĕне вĕренме кĕнĕ. Училищĕрен вĕренсе тухма май килмен. 1918 çулхи граждан вăрçи персе çитнĕ. Çĕршыва вăрçă вут-кăварĕ хыпса илнĕ. Çулла Валерий вĕренме пăрахнă та, затонра ашшĕпе пĕрле молотобоецăн подручнăйĕ пулса ĕçлес тесе, киле таврăннă. Унтан вăл хăйăр чавакан машина çинче, ун хыççăн вара Атăл тăрăх çӳрекен „Баян" ятлă (халĕ „Михаил Калинин") пароход çинче кочегар пулса ĕçленĕ.

Анчах унта Валерие тăвăр та кичем пулнă. Унăн тăвăллă натури ирĕкелле туртăннă, вăл хăйĕнче çăлкуçĕ пек тапса тăракан пуçарулăхне усăллă ĕçе, пархатарлă та харсăр ĕçе парасшăн пулнă.

1919 çулта Чулхулара (халĕ Горький) Валерий Павлович пуçласа гидросамолет курнă. Ăна курсан вăл тĕлĕнсех кайнă. Вăл ишекен тата вĕçекен хурçă кайăка тĕлĕнсе сăнаса тăнă. Самолет çине ларса пăхасчĕ! — шухăшланă вăл. Çакă вара унăн ĕмĕчĕ пулса тăнă. Пускил çынни авиаци механикĕ Владимир Фролищев ăна летчиксем çинчен кала-кала панă, унăн калавĕсем Чкаловăн авиацире ĕçлес хĕрӳ кăмăлне вăратса çирĕплетнĕ. Вăл вара кочегар ĕçне пăрахса хăйĕн ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара каять те самолетсем юсанă çĕрте слесарь пулса ĕçлеме тытăнать.

Халĕ ĕнтĕ Чкаловăн пĕр шухăш кăна: „Хамăн мĕнле вĕçме вĕренес-ши?" тесе ĕмĕтленет вăл. Кивелсе çитнĕ машинăсем сывлăшалла вĕçсе хăпарнине курсан, вăл вĕсене тĕмсĕлсе ăсатнă, вĕсене вăл тăрăшса вĕреннĕ, хăш чухне хăйне самолетпа вĕçтерекен летчиксене вăл тем выраннех хунă. Парк начальникĕ патне пырса вăл:

— Начальник юлташ, манăн летчик пулас килет!—тесе пĕрре кăна мар каланă.

Юлашкинчен вара ăна Егорьевскри авиаци шкулне вĕренме кĕме тĕл килнĕ. Кунта унăн хăйĕн пĕлӳлĕхне хăпартма тата хăй юратакан авиаци ĕçне вĕренме май пулнă. Хĕрлĕ Çар летчикĕн Валерий Чкаловăн питĕ паллă пурнăçĕ çапла пуçланнă. Хĕрлĕ Çар тата унăн авиацийĕн шкулĕсем—акă камсем Чкаловăн пирвайхи учителĕсемпе наставникĕсем.

Çулталăк çурă хушшинче Валерий Павлович авиаци шкулне теори енчен вĕренсе пĕтернĕ те практикăллă ĕçе тытăннă. Практика тĕлĕшпе те вăл лайăх аттестаципе вĕренсе тухнă. Унтан вара ăна Мускаври высший пилотаж шкулне вĕренме илнĕ. Ку шкула та лайăх вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, вăл вара бомба пăрахма тата пăшал пеме вĕрентекен аслă шкула вĕренме кĕнĕ. Вăл шкултан летчик-истребитель пулса тухнă хыççăн, ăна Ленинграда, N-ски хĕрлĕ ялавлă истребительнăй эскадрильене янă. Кунта вată, опытлă летчиксем ĕçленĕ. Çирĕм çулхи Валерий вĕсем мĕнле вĕçнине питĕ тимлĕн сăнанă, вăл вĕçевĕн кăткăс искусствине пĕтĕмĕшпех вĕренсе çитесшĕн пулнă, вара ăна та часах вĕренсе çитнĕ.

Ленинградри истребительнăй эскадрильере вĕренни Чкалов-

шăн питех те лайăх шкул пулнă., Кивĕ машинăсемпе вăл тем тĕрлĕ те вĕçнĕ, опытлă летчиксем унтан тĕлĕннĕ тата вăл хăвăрт ӳссе пынишĕн савăннă. Вăл фигурăллă вĕçевсем тунă, меcерле вĕçнĕ, шар-пилотсем çине тĕл пеме вĕреннĕ тата боевой подготовка енĕпе, кĕске вăхăтрах, эскадрильери чи лайăх летчиксене хуса çитсе иртсе кайнă.

Балти тинĕс флочĕн пысăк маневрĕсенчен пĕринче Чкалов боевой летчикăн калама çук пысăк пахалăхĕсене кăтартса панă.

Чкаловпа эскадрильери тепĕр летчике — Леонтьева—ответлă задани панă: вĕсен тинĕсре флагман карапне—„Марата" шыраса тупса, унăн палуби çине вымпел пăрахмалла пулнă. Вĕсен сухопутнăй самолетсемпе, çанталăк япăх тăнă вăхăтра, таврара нимĕн те курăнман условире шыв çийĕпе вĕçсе боевой задание пурнăçламалла пулнă.

Часах çанталăк йăлтах пăсăлса кайнă, çумăр хытă çăва пуçланă. Икĕ сехет çурă çӳресен, Леонтьев задание пурнăçламасăрах каялла таврăннă. Тата тепĕр сехет иртет, Чкаловăн ĕнтĕ бензин та пĕтсе çитмелле, вăл çаплах таврăнман-ха. Чкалова шырама кайма хатĕрленеççĕ...

Çав вăхăтра сасартăк Ораниенбаумран телефонпа шăнкăртаттараççĕ... Чкалов калаçать! Вăл эскадрилья командирне Антошин юлташа „Марата" тупса ун çине вымпел пăрахни çинчен пĕлтернĕ. Задание пурнăçланă. Бензин çителĕксĕр пулнă пирки вăл Ораниенбаумран темиçе çухрăмра чиперех анса ларнă. Вăл хăй патне моторист яма тата бензин илсе пыма ыйтнă. Ирхине эскадрильене вĕçсе пырсан, Чкалов:

— Эпĕ флагман карапне бакри бензин çыран хĕррине çитсе лармалăх кăна юличченех шырама шутларăм,—тенĕ.

Хĕрлĕ Çар—чăтăмлă, паттăр пулма вĕрентсе кăларакан çирĕп шкул. Вăл—Чкалов натуринче питĕ лайăх пахалăхсене палăртса çирĕплетрĕ. Истребительнăй эскадрильере пурăннă вăхăтра Чкалов хăй тăрăшуллă та хăюллă летчик иккенне кăтартнă. Эскадрильери летчиксем те, командирсем те, пурте ăна юратнă.

Октябрьти революци вунă çул тултарнине уявланă чухне, эскадрильери чи лайăх летчиксемпе пĕрле, Чкалов та Мускава вĕçсе кайса унти парада хутшăннă. Высший пилотажăн фигурисене питĕ лайăх тунăшăн ăна Ворошилов юлташ награда панă.

Высший пилотаж искусствине вĕренсе алла илесси çар авиацин летчикĕсене питех те кирлĕ пулса тăнине, юлашкинчен тата паттăр летчиксен пултарулăхĕпе пĕлӳлĕхĕ пурнăçри çапăçу хирĕнче тĕрĕсленмеллине вăл пĕлсе тăнă, çавăнпа та сывлăшри пулас çапăçусенче çĕнтерекенни пулма хатĕрленсе пынă.

Каярахпа вăл çапла çырнă:

«Сывлăшри пĕртан условисенчи çапăçура самолета лайăх тĕпчесе вĕреннĕ летчик кăна, машина мĕн пама пултарнине пурне те илме пултаракан летчик кăна çĕнтерме пултарнине халĕ пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Высший пилотаж вăл—кучухне сывлăшри çапăçу условийĕсенчен пĕрийĕ пулать. Вилĕмункисем тăвас ĕç, боевой разворотсем, иммельмансем, çунат урлă çаврăнасси,



Валерий Павлович Чкалов хăйĕн Игорь ятлă ывăлĕпе Мускав хысĕнчи авто-мотогонкăра. 1938 ç.



Валерий Чкалов çуралса ӳснӗ Василеври çурт (халь Чкаловск).

раверсмансем, çурта пек тӳрӗ улăхас ӗç, пичке тăвасси, штопорсемпе пикированисем туни — çак маневрсем пӗтӗмпех высший пилотаж арсеналне кӗреççӗ тата вӗсем летчике сывлăшра лайăххах положени йышăнма пулăшаççӗ. Çак фигурăсемпе усă курса хăрушлăх вăхăтӗнче летчик тăшманран хӳтӗленме пултарать".

„Высший пилотаж арсеналне" питех те лайăх пӗлнӗ пулсан та, Чкалов унпах нихăçан та лăпланса ларман. Ун ăшӗнче вӗçемсӗрех пултарулăх вăййӗ вӗресе тăнă. Вăл çӗнӗрен те çӗнӗ экспериментсем тăвасшăн çуннă.

Анчах та тӗрлӗрен фигурăллă вӗçевсем тăвас ӗçе вӗренме кирлине ӗнентерес ӗç Чкаловшăн çăмăл пулман. Чкалов эксперименчӗсем çине тӗрлӗ çынсем тӗрлӗ пăхнă. Çапăçура тӗл килекен темӗн чухлӗ çӗнӗ комбинацисене вӗреннӗ чух куçкӗретех е вăрттăн хирӗçнине пула, Чкалов хăш чух начальство тума хушман вӗçевсем тăва-тăва пăхнă, çавăншăн вара ăна хăш чух ятланă. Пултаруллă шухăшсене хирӗç пыракан çынсем, тăшмансем çинчен каламасăрах паллă, çав авиацин питех те кирлӗ эксперименчӗсене „харсăр вӗçевсем" тесе каланă.

Чăн та, малтанхи вăхăтра Чкаловăн вӗçев практикинче уйрăм харсăр вӗçевсем, юрăхсăрскерсем пулнă, анчах вӗсем те Чкаловăн паттăрлăхне, çав тери хăравçăсăрлăхне тата мастерлăхне кăтартса панă тата çав вӗçевсем совет авиацин историне самолетпа вӗçес ӗçри виртуозла тӗслӗхсем пулса кӗрсе юлнă.

Валерий Павлович вӗçес ӗçри йӗркесене пăхăнмасăр, „ыттисем пек мар" вӗçнисем те пулнă. Вăл вăрман хӗррисем тăрăх, хырсем хушшипе е фабрикăсен трубисем хушшипе вӗçсе тухнă, Ленинградри Исаакиевски собор тăрринче метеор пек хăвăрт



Сталинпа Орджоникидзе юлташсем Мускаври Фрунзе ячĕпе тăракан Центральнăй аэродромра Чкалов юлташпа калаçаççĕ. 1935 çулхи майĕн 2-мĕшĕ.

вĕçсе çӳренĕ, кĕпер айĕнчен тухнă, çĕр çумĕнче пекех фигурăллă вĕçевсем тунă. Вилĕм ункисене вара вăл вĕçĕмсĕрех тума пултарнă.

Çаксем çинчен вăл çапла çырнă:

„Пĕррехинче эпĕ хĕрĕх пилĕк минут хушшинче икçĕр аллă хут вилĕм ункисем турăм. Тепрехинче — икĕ йывăç хушшипе машинăна хăяккăн тытса чи хĕсĕк тĕлтен вĕçсе тухрăм. Пĕрре тата, тĕтреллĕ кунсенчен пĕринче, эпĕ хам амфибие, пăрланса ларнă пирки, ирĕксĕрех ыткăнса пыракан паровоз умне вирелле тăратрăм та, амфибипе паровоз хушши пĕр вунă утăмран ытла марччĕ ĕнтĕ,ун урлă сиксе каçса, юрпа витĕннĕ теплушкăсен тăррисене йĕлтĕрсемпе перĕнтермесĕр поезд хыçĕнчи сивĕ тĕтре ăшне кĕрсе çухалтăм. Эпĕ çĕртен 30—40 метр çӳллĕшĕнче те хам пуçа пырса кĕнĕ фигурăсене тума юрататтăм".

Пĕррехинче вăл инкек курнă. Гомельтен Брянска вĕçсе кайнă чухне вăл вĕçев правилине пăснă, телеграф пралукĕсем айне чăмса кĕнĕ, анчах аялти йĕркере пралуксем пуррине асăрхаман та, машинине çĕмĕрсе пăрахнă. Хăй çакăн пек чарусăрланнишĕн вара вăл хытă куляннă!..

Çакнашкал ниме юрăхсăр харсăрлăха Валерий Павлович часах пăрахнă тата ыттисене те çавăн пек хăтланма хушман.

— Мĕн пирки çавăн пек харсăрланмалла?—тенĕ вăл кайран.

Анчах вăл вăхăтра авиацине хĕсĕнсе кĕнĕ тăшмансем тата вĕсене пулăшакансем Чкаловăн çак чарусăр вĕçевĕсемпе усă курса, ăна хăйне те хĕсĕрленĕ, унăн творчествăллă ĕçне те тиркенĕ.

Совет авиацин интересĕсене хирĕç пыракан çынсем унăн питех те паллă ӳсĕмĕсен пĕлтерĕшне витсе хунă тата Чкалов самолетсене илсе çӳрес ĕçĕн чи лайăх искусствине çĕнĕрен хывнă хаклă çитĕнӳсене, харсăр экспериментсем тунипе çĕнтерсе илнĕ çитĕнӳсене шăлса лартма хăтланнă, ун çинчен элек сарнă, мăшкăланă. Чкалова „сывлăшри лихач" теме пăрахтарма сахал мар вăхăт кирлĕ пулнă.

1929 çулти декабрĕн 10-мĕшĕнче Ольга Эразмовна патне çырнă çырура Чкалов хурланса çапла çырать:

„Ку вĕт, эпĕ ĕçлеме пултарайманнинчен килмест,—ку вăл эпĕ ӳлĕмрен ниçта та усă курма май çук ĕçе тума килĕшменнинчен килет. Пĕтĕм ыйту кунта ĕçе тĕрлĕрен ăнланнинче... Эпĕ ыттисем пекех пулнă пулсан, халь вĕçнĕ пек вĕçес çукчĕ. Эпĕ ыттисем пекех вĕçнĕ пулсан, „дисциплинăсăр" çын та пулман пулăттăм. Анчах та ман вĕçевсем ыттисенчен раснах пулнă пирки вĕсене мĕнле те пулсан паллă тăвасах пулать вĕт. Çавăнпа та ĕнтĕ манăн вĕçевсене „сывлăшри хулиганство" тесе калаççĕ.

... Истребитель вырăнĕнче пулса çапла вĕçнине эпĕ тĕрĕс тесе шутлатăп, ӳлĕм тата та тĕрĕс тунă тесе шутлĕç мана. Тăшман айне пулас мар, ăна хăйне çĕмĕрсе тăкас тесен, пулас çапăçусене тухма ман яланах хатĕр тăмалла. Çакна тăвас пулсан ман хама хăнăхтарса çитермелле, çапăçура çĕнтерӳ пулассине шанса тăракан



Валерий Павлович Чкалов 1936 ҫулта Удд утравĕ ҫинчен таврӑннӑ хыҫҫӑн Щелковски аэродромри митингра сӑмах калать.

тумалла. Çапăçава шанчăклăн кĕрекенни кăна çĕнтерекенни пулать. Хăй пуçĕ пĕтессе пĕлсе тăрсах ыттисен пурнăçне хăтарассишĕн хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр çапăçакан боецсене çеç эпĕ чăн-чăн боец вырăнне хуратăп. Тăван çĕршыва кирлĕ пулсан, эпĕ хуть те хăçан та çавăн пек тума пултаратăп..."

Çакăн пек пысăк тĕллевлĕ пулнăшăн тата тăван çĕршыва парăнса тăнишĕн халăха тата партие хирĕçле пыракан этемсем ăна хĕсĕрленĕ.

Çавсем хĕсĕрленине пула ĕнтĕ çакнашкал питех те чаплă паттар летчик-истребитель Чкалов (ăна 1927 çултах Ворошилов юлташ лайăх енĕпе палăртнă) 1929 çулта Хĕрлĕ Çартан таврăнать, пĕр вăхăтлăха вăл ĕçсĕр çӳрет, унтан вара Осоавиахим организацинче летчик пулса „Юнкерс" самолетпа пассажирсем турттарса çӳрет.

Анчах Чкалов Хĕрлĕ Çар тулашĕнче юлма пултарайман, çар летчикĕн творчествăллă ĕçĕсĕр пурăнма пултарайман вăл, 1930 çул вĕçĕнче вăл каллех çар авиацине ВВС НИИ-не ĕçлеме кĕнĕ.

Кунта вăл пĕтĕмĕшпех инструктор ĕçне туса пырать, ответлă вĕçевсене пурнăçласа пырать. Вăл хăйĕн ĕçне каллех çĕнĕрен çине тăрса тăвать. Çавăнпа пĕрлех ăна хĕсĕрлеме те пăрахмаççĕ. Чкалов вара Менжинский ячĕпе тăракан завода ĕçлеме куçать. Унта вăл летчик-испытатель вырăнĕнче пулать. Кунта унăн пурнăçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланать. Заводри аван коллектив Чкаловăн хăюллă ĕçĕ çине питĕ сисĕмлĕн пăхать, унăн сăмаххисене итлет.

Каярахпа, Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăна вĕçсе каçни çинчен отчет тунă вăхăтра, Чкалов заводра ĕçленĕ чухнехи çулсене ăшă кăмăлпа аса илнĕ, завод коллективне вăл юлташла пулăшнăшăн чĕререн тав тунă.

„Совет Союзĕн пулас геройĕ совет авиацин тăшманĕсемпе, творчествăллă шухăша путарса пыракансемпе, рутинерсемпе кĕрешсе пысăк çĕнтерӳсем тума çитĕннĕ. Чкалов çав-çавах пĕр шиксĕр летчик пулса юлнă, унăн каллех хăюллă вĕçевсем тумалла пулнă. Анчах халь ĕнтĕ вăл тăшмансемпе рутинерсене хăйĕн хаклă эксперименчĕсемпе ăнсăртран тунă вĕçевĕсене пурне те пĕр хак хурса пĕр çĕре купаласа хума май паман. Халĕ ĕнтĕ ку,—Чкалов каярахпа аса илнĕ пек—„урăх йышши хăюлăх—чăннипе, пур енчен те шухăшласа пăхса тунă хăюлăх" пулнă.

Чкалов опытсем тата экспериментсем тума нихăçан та пăрахман. Вăл хăй тăвакан ĕçсене пурне те хăйне тата хăйĕн машинине тата та пахарах вĕçевсем, çĕнтерӳсемпе харсăр ĕçсем тума хатĕрленес тĕлĕшпе тĕрĕслесе пăхни, тесе шутланă. Хăйĕн вĕçев практикинче Чкалов йывăр положенине, хăй калашле, „шайсăр" çĕре пĕрре кăна мар çакланса унтан чиперех вĕçерĕннĕ. Çак „сывлăшра темтепĕр курнисем" совет тата тĕнче авиацин историне кĕрсе юлнă.

„Пĕррехинче, хĕлле, пикирующи текен вĕçеве тунă чухне манăн машинăн йĕлтĕрне тытакан хăлхийĕ татăлса ӳкрĕ,—аса илет Чкалов.—Йĕлтĕрĕ çаврăнса тăма пуçларĕ. Питĕ хăрушă вăхăт килсе тухрĕ. Анчах эпĕ çухалса каймарăм: çĕр çывăхне

çитнĕ чух мотора чарса лартса хăвăртлăха пĕтерниле машинăна шăпах антарса лартрăм.

Хытă вĕçекен самолетпа, шассине пуçтармалласкерпе пулса иртнĕ тепĕр ĕç аса килчĕ. Эпĕ, анса ларас тесе, шассине кăлар-ма тытăнтăм. Шассин сылтăм „ури" тухрĕ, сулахайĕ тухма-рĕ. Антарса лартнă чухне авари пуласси куç умĕнчех темелле. Машинăна мĕнле çăлас! Эпĕ самолета аялалла питĕ хытă антар-са тăрук тÿрлетрĕм те ман çамка чĕркуççи çине пырса çапăнчĕ. Самантлăха ăнран кайрăм. Шасси çав-çавах, тÿрлен-мен. Машинăна хăвăрт ярса икшер хут çавăрттара пуçларăм. Кăлăхах! Унтан самолета сылтăмалла, унтан сулахаялла çавăр-тăм, машинăна месерле вырттарса вĕçрĕм, каллех çÿле хăпартăм та аялалла чул пек ыткăнтăм. Сывлăшра çакăн пек акробати-кăллă вĕçевсем тунă хыççăн ман тăнлавсем минтре пуçларĕç, анчах çавах та эпĕ машинăн сулахай „ури" хăй вырăнне ларич-чен ăна ÿпне-питне çавăрма чарăнмарăм.

Шассин сулахай „ури" вырăна ларсан эпĕ çăмăллăн сывласа ятăм. Сехет çине пăхатăп—аэродром çинче çакнашкал „фокус-сене" эпĕ хĕрĕх минут хушши туса хăтланнă иккен. Çакнашкал фигурăсене пĕрин хыççăн теприне тунине пула кăна эпĕ маши-нăна çăлтăм. Вăл вăхăтра эпĕ шассине çеç мар вĕçертсе ятăм тата самолет çирĕплĕхне те тĕрĕслерĕм".

Тата çакăн пек те пулса иртнĕ. Черетлĕ вĕçев вăхăтĕнче бомбăсем тиесе тултарнă самолетăн моторĕсем ĕçлеме чарăннă. Бомбăсене пăрахма май килмен—аялта çынсем пулнă. Бомбăллă самолета хĕсĕк вырăна антарса лартас—хăрушă. Çапах та Чка-лов самолета чиперех антарса лартнă. Машинăна мастерла ан-тарса лартнипе кăна инкекрен хăтăлнă вăл.

Пĕррехинче, практикăллă заняти вăхăтĕнче, Чкаловпа Байду-ков пĕр-пĕрин çине „тапăннă". Вĕсем хире-хирĕç вĕçнĕ. Пĕр-пĕрин хушши 500 метр кăна юлсан та вĕсем нихăшĕ те аяккал-ла пăрăнман. Машинăсем иккĕшĕн те питех те хăвăрт, шăп тĕлме-тĕл вĕçнĕ. Вилĕмрен çăлăнма та май çук темелле ĕнтĕ, ан-чах шăп çак вăхăтра вĕсем, машинăсене месерле çавăрса çÿлелле çĕкленнĕ те, иммельмансем туса тĕрлĕ еннелле уйăрăлса кайнă. Чкалов хăйĕн юлташĕпе пĕрле мастерлăхăн çĕнĕ класне туса кăтартнă.

„Пĕррехинче Валерий пĕр ютçĕршывран килнĕ делегацине высший пилотаж туса кăтартрĕ,—асаилет Совет Союзĕн Геройĕ Владимир Коккинаки.—Вăраххăн, пичке пек вĕçев тунă вăхăтра самолет месерле кайса ÿкрĕ те çаплипех аялалла вăркăнса анма пуçларĕ. Эпĕ летчик, çавăнпа эпĕ вăл мĕнле положенин-че пулнине лайăх чухлатăп. Машина çĕрелле хăвăрт çывхарса пырать... Манăн çÿç-пуç вирелле тăрса кайрĕ. Сасартăк çĕр çумĕнчен ик-виç метрта Валерий машинăна ÿпне вырттарчĕ те чиперех анса ларчĕ.

Самолет ларчĕ те Валерий машина çинчен анчĕ. Эпĕ ун патне ыткăнса пытăм.

— Эсĕ мĕн, вилес терĕн-им!—тесе кăшкăратăп.

— Мĕн вилмелли пур,—лăпкăн ответлерĕ Чкалов.



Сталинпа Чкалов юлташсем „Щелковски аэродромра. 1936 ç.

— Хăрарăн-и?—терĕм эпĕ, пĕлесшĕн пулса.
— Мĕн кирлĕ мара калаçатăн—мĕншĕн хăрас? — терĕ вăл.

Çапла, Чкалов пĕрре те хăраман. Вăл вилĕмрен çӳç пĕрчи вĕçĕнче тытăнса юлнă. Авиацие пĕлмен çын çакна ăнланса илме пултарайман, анчах эпĕ унăн пурнăçĕ вилĕмпе юнашарах тăнине лайăх курса тăтăм, вилĕмрен ниепле те çăлăнма пултарассăн туйăнмарĕ вăл мана. Çав тери паттăр та хăюллă пулнипе кăна Чкалов çак йывăр положенинчен çăлăнма пултарнă".

Самолета тĕрĕслес майпа вĕçнĕ чухне Чкалов самолечĕн моторĕ пайăн-пайăн вакланса кайни те пулнă. Пилотсем калашле, кунтан усалли урăх çук вара. Хăвăрт шухăшласа илме пултарни кăна Чкалова вилĕмрен çăлнă. Чкалов самолета йăвă вăрман варрине антарса лартнă. Самолечĕ пĕтĕмпех арканса кайнă, Чкалов та пуçне суранлатнă тата йывăрах мар аманнă.

Чкалов ытла та хăюллă çын пулнă.

Чкалов летчик-испытатель пулса ĕçленĕ чухне 70 тĕслĕ самолет ытла тĕрĕсленĕ. Вăл „Фарман—20" самолетпа вĕçнĕ, унтан „Вуазенпа", „Фоккерпа", „Авропа", „Ньюпорпа" вĕçнĕ. Хамăр патăрта туса кăларнă пирвайхи машинăсене Чкалов хĕпĕртесе тĕрĕсленĕ, совет конструкторĕсен ĕçĕпе мухтаннă. Вăл çĕнĕ машинăсем тунă чух вĕсене мĕнле тунине тимлĕн сăнанă, вĕсен конструкцийĕсене лайăхлатма пулăшнă.

Летчик-испытателĕн ĕçĕ епле йывăр та кăткăсси пурне те паллă. Чкалов халь кăна туса кăларнă çĕнĕ машинăсене тĕрĕсленĕ. Вăл вĕсен чăтăмлăхне, хăвăртлăхне, вĕсем çӳлелле мĕн таран хăпарма тата маневрлама пултарнине тĕрĕслесе пĕлнĕ, вĕсен характерĕсене, чăтăмлăхĕсене вĕреннĕ.

„Испытателĕн самолета тĕрĕсленĕ чух ăна питĕ пысăк нагрузка парас пулать,—кайран вара вăл ун пек нагрузкăна урăх чăтса курмалла мар,—тесе çырнă Чкалов летчик-испытателĕн ĕçĕ çинчен.—Кучухнехи хăвăрт вĕçекен самолетсене тĕрĕслес ĕçе тума летчикăн сывлăхĕ калама çук çирĕп пулмалла. Машина лайăх иккенне туйса илме пулать, анчах ăна ытла та хăвăрт вĕçтерсе тĕрĕслеме, вăл мĕн пама пултарнине пĕтĕмпех илме вăй та нумай кирлĕ.

... Конструктор летчик-испытательтен самолета тĕрĕс „диагноз" лартасса кĕтет. Летчик-испытателĕн машинăн тата унăн нумай приборĕсен мĕнпур свойствисене пурне те хăвăрт вĕренсе çитмелле. Испытатель машинăн уйрăм çитменлĕхĕсене хăвăрт палăртма пултарнинчен, нимрен ытла вĕсен сăлтавĕсене тĕрĕс палăртма пĕлнинчен пурте килет темелле".

Чкалов летчик-испытательсем умне мĕн кăларса тăратнă, çавсене вăл чи малтан хăй пурнăçланă. Вăл самолета пур енчен те тĕрĕсленĕ, хăйĕн тĕрĕс „диагнозĕпе" вăл конструкторсене машинăсен пахалăхне лайăхлатма пулăшнă.

Çĕнĕ машинăна сывлăшра тĕрĕсленĕ чухне тем те пулма пултарать, çавăнпа та хуть те мĕнле йывăрлăхсене те çĕнтерсе илме хатĕр тăрас пулать, хуть те мĕнле положение кĕрсе ӳксен те, унтан çăлăнса тухмалли майсене хăвăрт тупас пулать. Çак ĕçе тума мĕн чухлĕ тимлĕх кирли çинчен Чкалов çапла çырнă:

„Сăмахран, истребителе тĕрĕсленĕ чух эпĕ час-часах пике тăватăп та, ăна сехетре 600 километр хăвăртлăхпа вĕçтерсе, çӳлтен аялалла тӳп-турĕ вĕçсе анатăп. Çакнашкал хăвăртлăхпа вĕçнĕ чух эсир пуçăра кăларса пăхсан, сирĕн пуçăр часах пăрăнса ларнă пулĕччĕ. Пикерен тухнă чухне çур секундлăха та пулин чарăнса тăрсан—çĕр çине тирĕнсе анма пулать".

Чкалов пурнăçĕнчи чи паллă событи вăл—Сталин юлташпа тĕл пулни. Çав тĕлпулу Валерий Павлович Чкаловăн малашнехи ĕçĕнче татăклă та паллă вырăн йышăнса тăчĕ. Вăл Чкалов мĕнле ĕçре уйрăмăнах пултаруллине палăртрĕ темелле, унăн тăвăл пек пурнăçне вăл малалли тĕллеве кăтартса пачĕ, тăван çĕршывшăн усăллă, çĕнĕ паттăрла ĕçсем тума май пачĕ тата малаллахи ĕмĕтсене пурнăçламалли çула уçса пачĕ.

1935 çулхи майăн 2-мĕшĕнче Фрунзе ячĕпе тăракан Центральнăй аэродромра Ворошилов юлташ Чкалова Сталин юлташпа паллаштарнă. Сталин юлташ ăна ыйтусем панă, çав ыйтусем çине Чкалов панă ответсене вăл тимлĕн итленĕ, унтан вăл Чкалова ыйту панă. Мĕншĕн парашютпа усă курмастăн, мĕншĕн хăть мĕнле пулсан та машинăна çăлса хăварма тăрăшатăн, тесе ыйтнă вăл Чкаловран.

„Эпĕ çапла ответлерĕм,—аса илет Чкалов,—эпĕ питĕ хаклă та опытлă машинăсем çинче вĕçетĕп, çĕмĕрме шел вĕсене. Кирек хăçан та машинăна çăлма тăрăшатăп, унпа пĕрле вара хама та".

— Сирĕн пурнăçăр пирĕншĕн кирек мĕнле машинăран та хаклă,—тенĕ Сталин юлташ.

Чкалов Сталин юлташпа калаçнине асра тытса пурăннă, çулпуçĕн хаклă та паха сăмахĕсем çинчен нумайччен шухăшласа çӳренĕ.

„Аслă çулпуçпа тĕл пулнă хыççăн ман пурнăç содержанийĕ татах та пуянланчĕ: эпĕ малтанхинчен дисциплинăллăрах пулса вĕçме пуçларăм; хамăрăн илемлĕ тăван çĕршывшăн ĕçлеме вăй нумай хутшăннă пек туйăнчĕ мана. Сталин юлташпа тĕл пулнин результачĕ вăл—эпир (Байдуков, Беляков тата эпĕ) Мускавран Удд утравĕ çине вĕçни пулса тăчĕ".

Чкалова Сталин юлташпа тĕл пулма пĕрре кăна мар тӳр килнĕ. Кашни тĕл пулмассеренех вара вăл хумханса çӳренĕ.

Çурçĕр полюсне вĕçмелли плана хатĕрлесен Чкалов ăна пăхса тухасса питĕ кĕтнĕ. Чкалова Сталин юлташ патне чĕннĕ. „Сталин юлташ манăн проект çинчен мĕн калĕ-ши?"—тесе шухăшланă Чкалов.

„Халăхсен çулпуçĕпе тĕл пулса хумханнăскерсем, эпир вăл мĕн каласса кĕтетпĕр,—тет Чкалов.—Сталин юлташ полюс çине вĕçме ирĕк парĕ-ши? Çак ответлă та хисеплĕ задачăна пире шанса парĕ-ши? Памасть пулсан вара?.. Анчах Сталин юлташ çапла каларĕ:

— Мĕншĕн-ха обязательнă Çурçĕр полюсне вĕçмелле? Летчиксене пĕрре те хăрушă пек туйăнмасть пулмалла—харсăрланма хăнăхнă. Кирлĕ мар çĕртенех мĕншĕн-ха харсăрланмалла?

Иосиф Виссарионович пире карттă тăрăх урăх çула кăтартса пачĕ: Мускав—Камчаткăри Петропавловск. Ку çул çинчен эпир



«N0-25» самолет.

нихăçан та шухăшламан. Сталин юлташ сĕнĕвĕ пирĕншĕн кĕтмен сенӳ пулчĕ, çав хушăрах вăл питĕ илĕртекенскер пулчĕ... Эпир çак маршрута часах йышăнтăмăр та Сталинла маршрут тесе ят патăмăр".

Вĕçеве хатĕрленес ĕçсене туса пĕтерсен, хăш кун вĕçеве тухса каяссине палăртас умĕн Чкалов каллех Сталин юлташпа тĕл пулса калаçнă.

Проекта ырланă. Калаçăва пĕтерес умĕн Сталин юлташ Чкалов тройкипе сывпуллашса, аллине чĕри тĕлне тытса çапла ыйтнă:

— Ну, тĕрĕссипе калăр, сирĕн унта пурте йĕркеллех-и, иккĕленӳ ăманĕ çук-и унта сирĕн?

— Çук, Сталин юлташ,—тенĕ Чкалов.—Эпир хумханмастпăр, эпир вĕçме хатĕр.

Чкалов тройкин аллисене чăмăртаса Сталин юлташ çапла каланă:

— Ну, юрĕ ĕнтĕ. Эсир шухăшланă пек пултăр.

Вĕçме путевка панă.

Юлашкинчен старт та панă, вара хĕрлĕ çунатлă чаплă самолет Мускавран Камчаткăри Петропавловск еннелле çул тытнă.

Çак манăçа тухми кунсене пурте астăваççĕ. Хăйсен мастерлăхне мобилизацилесе калама çук пысăк йывăрлăхсене çĕнсе илсе, легендарлă самолетăн экипажĕ сталинла задание питех те аван пурнăçларĕ.

Самолет 56 сехет те 20 минут хушшинче 9.374 километр хушши вĕçнĕ, вĕсенчен 8.774 километр хушши маршрут тăрăх, 600 километрне Çурçĕр Çĕрĕпе Охотск тинĕсĕ районĕнче пулнă циклонран пăрăнса иртес тĕлĕшпе вĕçнĕ.

Чкалов тройки йывăр вăхăтсене нумай чăтса иртернĕ, анчах экипаж, питех те чăтăмлă пулнипе, вĕçеве инçетри Удд утравĕ çинче вĕçленĕ. Йывăрлăхсенчен хăраман, вĕсене паттăррăн çĕнсе илекен чăн-чăн большевиксем кăна Сталинла маршрутпа вĕçме пултарнă. Çапла çĕнсе илнĕ Чкалов пирвайхи чи пысăк çĕнтерĕве, совет авиацин пĕтĕм тĕнчери ӳсĕмĕсенчен пĕрне. Экипаж Петропавловска çитиччченех Сталин, Молотов, Орджоникидзе тата Димитров юлташсенчен хĕрӳллĕ радиограмма илнĕ:

„Сирĕн вĕçеве пĕтĕм çĕршыв сăнаса тăрать. Сирĕн çĕнтерӳ Совет çĕршывĕн çĕнтерĕвĕ пулать. Сире ăнăçлăн вĕçме сĕнетпĕр. Сирĕн аллăрсене хытă чăмăртатпăр".

Вĕçев пурнăçлансан пĕтĕм çĕршыв хĕпĕртесе савăннă. Мускав чаплă экипажа питĕ хаваслăн кĕтсе илнĕ. Чкалова, Байдукова тата Белякова Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

Анчах Чкалов çак çитĕнӳсемпех лăпланса ларман, вăл Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăна вĕçсе каясси çинчен çине тăрсах шухăшланă. Сочинче каннă вăхăтра Сталин юлташ Чкалов тройкине арăмĕсемпе пĕрле хăй патне хăнана чĕннĕ. Çавăн чухне Валерий Павлович Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăна вĕçсе каясси çинчен Сталин юлташран каллех тепĕр хут ыйтнă.

Америкăна вĕçсе кайма геройла тройка нумай вăхăт хушши тата питĕ тĕплĕн хатĕрленнĕ. Полюс урлă вĕçмелли плана туса хатĕрленĕ хыççăн правительство ответ парасса Чкалов хумханса кĕтнĕ. Пысăк вĕçев тумалли плана çирĕплетнине пĕлсен, вăл вара вĕçеве питĕ хĕрӳллĕн хатĕрленме тытăннă. Анчах çирĕплетнĕ план Водопьянов планĕ пулнă-мĕн, вăл ăна полюса вĕçме хатĕрленĕ пулнă иккен. Чкалов çак решенин тĕп шухăшне часах ăнланса илеймен. Кайран тин пурте паллă пулнă. Çурçĕр полюсĕ çине историллĕ экспедици яни Америкăна вĕçсе каяс умĕнхи хатĕрленӳ ĕçĕнче кирлĕ тапхăр пулса тăчĕ.

Америкăна вĕçсе каяс умĕн Чкаловла тройкăна каллех Кремле чĕнсе илнĕ. Вĕçеве хатĕрленсе çитни çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлсен Сталин юлташ çапла каланă:

— Эпĕ вĕсем майлă, анчах вĕçев командирне Чкалов юлташа кăшт кăна хăрушлăх пулсанах, Канадăна анса ларма хушатăп.

„Пирĕн çине калама çук пысăк шанăç хунăшăн Сталин юлташа тав тума сăмах та тупса калама пултараймарăм,—асаилет Чкалов.—Хаклă çулпуçăн аллине хытă чăмăртаса, эпĕ çапла каларăм:

— Пирĕн çине шанăç хунăшăн тавтапуç, Сталин юлташ. Эпир ăна тӳрре кăларăпăр",—терĕм.

Самолета вĕçеве хатĕрлесе çитерме пуçланă. Экипажа кирлĕ пек оборудованисем хатĕрлесе парас ĕçе пĕтĕм çĕршыв хутшăннă. Самолета пур енчен те тĕрĕсленĕ. Пĕчĕк çитменлĕхсене

те палăртса юсанă, тӳрлетнĕ, çĕнĕ приборсем вырнаçтарса лартнă, авиаци историйĕнчи чи хăюллă вĕçеве хăрушлатма пултаракан ĕçсене пурне те шута илнĕ.

Июнĕн 18-мĕшĕнче ирхине самолет старта тухнă...

Çурçĕр полюсĕ, никам пырса кĕмелле мар полюс урлă Америкăна çитес çул çинче Чкаловăн паттăр тройки мĕнле йывăрлăхсем чăтса ирттерни пурне те паллă. Сталинла маршрутпа вĕçни халĕ ĕнтĕ Чкаловшăн уçăлса çӳрени пек кăна туйăннă. Циклонсем, сĕм тĕтрелĕхсем, самолет пăрланса ларни, Çурçĕр Америкăн чуллă тăвĕсем—çаксем пурте паттăр летчиксене харсăрланнăшăн такăнтарма тăрăшнă. Анчах çĕнтерӳ Сталин пăхса çитĕнтернĕ çынсем енче пулчĕ. Нумай çулсем хушшинче пухăннă опыт, паттăрлăх, чăтăмлăх, хăйсен ĕçне питех те лайăх пĕлни—Чкаловпа унăн экипажне çĕнтерӳ тума май пачĕç. Самолет 63 сехет те 25 минут хушшинче, сывлăш çулĕпе шутласан 12 пин километр хушши, çĕр çинчи çулпа шутласан 10 пин километр хушши ытла, вăл шутра океанпа пăрсем çийĕнчен 5900 километр хушши вĕçсе Портланд çывăхĕнчи Ванкувер аэродромне анса ларнă.

Сталин юлташпа унăн соратникĕсем панă телеграмма çак чи паллă вĕçеве татăклă хак панă. Телеграммăра çапла каланă:

„Сире питĕ пысăк çĕнтерӳ тунăшăн хĕрӳллĕн саламлатпăр. Мускав—Çурçĕр полюсĕ—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене пĕр анса лармасăр геройла ăнăçлăн вĕçсе çитнинчен Совет Союзĕнчи пĕтĕм ĕçсыннисем тĕлĕнсе савăнаççĕ. Палăртнă тĕллеве пурнăçлас ĕçре нимле чăрмав умĕнче те чарăнса тăман паттăр Совет летчикĕсемпе мухтанатпăр.

Сире ыталатпăр, сирĕн аллăрсене чăмăртатпăр".

Америкăна вĕçсе çитни совет авиацийĕ калама çук пысăк ӳсĕм тунине тата совет летчикĕсен паттăрлăхне демонстрацилесе кăтартас тĕлĕшпе кăна мар питĕ паха—вăл тата икĕ аслă çĕршыва пĕр-пĕринпе туслă пурăнма май туса пачĕ. Америка халăхĕсем çак вĕçеве пысăк хаваслăхпа сăнарĕç тата вĕсем совет летчикĕсен паттăрлăхĕнчен тĕлĕнсе савăнчĕç. Паттăр тройка Портландра чухнех Рузвельтран саламлă телеграмма илчĕ. Кайран вара президент вĕсене хăй патне чĕнсе илсе йышăнчĕ. Чкалов Америкăна вĕçни çинчен пĕтĕм тĕнче калаçрĕ. Çак вĕçев пĕтĕм тĕнче умĕнче совет авиацин вăй-хăватне тата совет летчикĕсен геройлăхне демонстрацилесе кăтартрĕ.

Çак историллĕ икĕ вĕçев Чкалова хăйĕн питех те пысăк талантне, хăйĕн калама çук пысăк мастерлăхне кăтартса пама май пачĕç, ăна пирĕн вăхăтри аслă летчик тесе калама тивĕç паракан пахалăхсене пурне те кăтартса пачĕç.

Çак историллĕ икĕ вĕçевре Чкалов хăйĕн пĕтĕм пĕлӳлĕхĕпе, экспериментсем вĕçĕмсĕр туса пухнă опытпа усă курнă тата вăл творчествăллă шухăшлă этем, Сталин вĕрентсе çитĕнтернĕ боец мĕн тума пултарассине кăтартса пачĕ.

Чкалов яланах хаваслă пулнă. Вăл хăйне пысăка хуман çын пулнă, ушкăнпа пĕрле пурăнма юратнă, юлташĕсемпе тата помощникĕсемпе питĕ лайăх пурăннă. Америкăна вĕçнĕ чух вăл йы-



«N0-25»самолет вĕçевре.

вăр вăхăтсенче хăйĕн кислородне, экипаж членĕсем хушшинче пуринчен те чăтăмлăрах пулнă пирки, Байдуковпа Белякова панă.

Чкалов яланах хăйĕн экипажĕ ячĕпе калаçнă, нихăçан та „эпĕ“ сăмаха мала хурса калаçман. Вăл яланах: „Эпир вĕçетпĕр“, „пирĕн экипаж çаксене-çаксене тума шутлать тата çаксене-çаксене тăвать“,—тенĕ. Вăл хăйпе вĕçекенсен тивĕçне уйрăмăнах тăрăшса тата юратса пăллă тунă.

Ăна хăй çинчен калама ыйтсан, вăл хăйпе пĕрле Удд утравĕ çине тата Америкăна вĕçнĕ ытти юлташĕсем çинчен каласа панă. Байдуков çинчен вăл тĕлĕнсе, савăнса каласа панă, уйрăмăнах унăн ним курăнман вăхăтра вĕçес ĕçри мастерлăхне паллă тунă. Штурман ĕçне тăвакан Беляковран вăл шăлт тĕлĕннĕ. Сталинла маршрут тăрăх тата Америкăна вĕçнĕ чухнехи йывăр минутсене асаилсе вăл çапла çырнă:

„Эпир пĕр-пĕрне лайăх пĕлетпĕр, эпир кашчин тивĕçне тата çитменлĕхне те пĕлетпĕр, нимрен ытла эпир, ку ĕнтĕ уйрăмах питĕ пахи пулать, пĕр-пĕрне шанатпăр...

Саша Беляков мана тĕрĕс çул кăтартса пырасса эпĕ яланах пĕлнĕ. Метеорологиллĕ йывăр обстановкăра темиçе сехет хушши курмасăр вĕçмелли штурвала Егор Байдуков аллине парса, эпĕ канлĕ çывăрма пултарнă“.

Байдуков çинчен çапла çырнă:

„Егор Байдуков—сывлăшри ăстаçă, ун пек самолета пĕлĕтсем тата тĕтре витĕр илсе каякан ăстаçă-летчике пĕтĕм сывлăш флочĕпе те шыраса тупас çук пулĕ. Хам эпĕ ун пек ăстаçă летчик татах пуррине пĕлместĕп. Машина тĕксĕм шăплăха кĕрсе кайсан, темиçе сехет хушши пĕлĕт те, çĕр те, самолет çуначĕсем те курăнман вăхăтра Байдуков пилот вырăнĕнче ларать пулсан, вăл куçĕсене чарса приборсем мĕн-мĕн кăтартнине тимлĕн пăхса пырать пулсан вара, лăпкăнах ларса пыма пулать. Машина пĕлĕтсем хушшинчен палăртса хунă çул çине тухатех вара“.

Беляков çинчен вăл çапла каланă:

„ССР Союзĕн авиацийĕ Беляков пек штурманпа мухтанма пултарать. Вăл „N0-25“ самолета тĕрĕс çулпа илсе кайрĕ тата вăл штурман ĕçне питех те аван туса пычĕ“.

Сталинла маршрутпа вĕçсе тухнă хыççăн, Чкаловран вĕçев çинчен тĕплĕн каласа пама ыйтсан вăл:

„Мĕскер çинчен каласа парас... Эпир, пĕтĕмĕшпе илсен, вăйпа ĕçлекен çынсем. Беляков вара—пирĕн ученăй вăй... Вăт вăл ăслă çын вара...“—тенĕ.

Пĕррехинче Чкалов Америкăна вĕçни çинчен тĕплĕн каласа панă, анчах Беляковпа Байдуков хушамачĕсене кăна асăннă, вара калаçăва итлекенсенчен пĕри:

— Каласа парăр-ха, Валерий Павлович, вăл вĕçевре Чкалов пулнă-и, пулман-и?—тесе ыйтнă.

Итлекенсем кулма чарăнсан, Валерий Павлович каллех хăйĕн тусĕсем çинчен калама пуçланă.

Чкалов пĕрремĕш класлă летчик пулнă, вăл çамрăк летчик-

сем мӗнле ӗҫленине питӗ тимлӗн сӑнанӑ, вӑл вӗсен ӳсӗмӗсене кура хӗпӗртенӗ тата вӗсенчен вӗреннӗ.

„Хӑшпӗр ватӑ летчиксем,—тесе ҫырнӑ Чкалов,—ҫамрӑксем вӗсенчен лайӑхрах вӗҫнишӗн, вӗҫев техникине вӗсенчен лайӑхрах вӗренсе алла илнишӗн тӗмсӗлеҫҫӗ. Эпӗ апла мар вара, ман ун пек тӗмсӗлес йӑла ҫук.

Маншӑн пулсан ҫакӑ паллӑ: ҫамрӑк летчик вӗҫев техникине вӗренсе алла илнӗ. Эпӗ вӗрентнӗ вӗт ӑна, апла пулсан вӑл манран та мӗн те пулин вӗреннӗ.

Акӑ тӗслӗх: Эпӗ „У-2" самолетпа ниепле те штопор тума пултараймастӑп. Эпӗ пӗр ҫамрӑк пилот патне, хам ученик патне пытӑм та „Эсӗ ҫакна мӗнле тӑватӑн?" тесе ыйтрӑм. Вӑл вара мана каласа пачӗ. Эпӗ вара „У-2" самолетпа сывлӑша ҫӗкленсе шӑпах вӑл каланӑ тӑрӑх штопор турӑм. Мӗн вӑтанмалли пур кунта? Ним кӳренмелли те ҫук. Хамӑрӑн ҫамрӑк та пултаруллӑ кадрсем пуррине кура мухтанмалла ҫеҫ."

Пирӗн авиацин вӑйӗ унӑн материальнӑй чаҫӗ ҫав тери паха пулнинче кӑна маррине, унӑн вӑйӗ пуринчен малтан кадрсенче, вӑл кадрсем халӑх хушшинчен тухса пынинче пулнине Чкалов пит лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Вӑл большевикла кадрсен вӑйне пӗлнӗ!

Удд утравӗ ҫинчен Мускава таврӑнсан, Чкалов хӑйӗн рапортӗнче ҫапла ҫырнӑ:

„Манӑн, Сталин юлташ, эпир кунта виҫҫӗн мар, эпир пинӗн пулнӑ тесе калас килет, мӗншӗн тесен вӗсем те, Сталин юлташ, сирӗн маршрута хуть те хӑҫан та пурнӑҫлама пултарӗҫ!"

Вӑл хӑйӗн „Наш трансполярный рейс" ятлӑ кӗнекине ҫакӑн пек сӑмахсемпе вӗҫленӗ:

„Тавтапуҫ Сире, Иосиф Виссарионович! Тӑшмансем пӗлсе тӑччӑр: правительство пӗрре чӗнсенех Эсир пӑхса ҫитӗнтернӗ Сталинла соколсем пиншерӗн сывлӑша ҫӗкленӗҫ, хӑйсен ҫӗршывне хӑйсен кӑкрипе хӳтлӗҫ."

Сталин юлташ совет авиацин ҫыннисемшӗн пуриншӗн те епле тимлӗн тӑрӑшнине тата вӑл ӑна тӗреклетессишӗн епле хытӑ тӑрӑшнине Чкалов юлташ лайӑх пӗлнӗ.

Ҫын пырса курман, илтмен вырӑнсене пӑхӑнтаракан тата ҫӳлелле улӑхакан летчик вӑл хӑй пӗчченҫи кӑна маррине, унпа пӗрле пӗтӗм ҫӗршыв, чи малтан Сталин юлташ тӑнине яланах пӗлсе туйса тӑрать...

Авиацинче Сталин ячӗ йыхрав пек ҫӗнтерӳллӗн янтраса тӑрать. Ҫавӑнпа та летчиксем уйрӑмӑнах Сталина хытӑ юратаҫҫӗ, вӑл та вӗсене юратать. Сталин вӗсене хавхалантарать, сыхласа усрать".

Чкалов Сталин ятне питӗ те юратса ӑшӑ кӑмӑлпа асӑннӑ. Вӑл тӑван ҫӗршывшӑн, большевикла партишӗн, Сталин юлташшӑн хуть те хӑҫан та хӑйӗн пуҫне хума хатӗр пулнӑ.

Сталин юлташ хӑй пӑхса ҫитӗнтернӗ летчика мӗнле хытӑ юратни те пире паллӑ.

Чкалов Сталина атте тесе чӗннӗ:

„Атте!

Эпĕ Сталин юлташа пĕрре кăна мар курнă, эпĕ унпа аэродромра, Кремльри чаплă историллĕ залра, унăн простой кабинетĕнче тата Сочи çывăхĕнчи фруктă йывăççисемлĕ дачăра тĕл пулса калаçнă. Вăл кирек ăçта та пĕр пекех. Унăн кашни сăмаххинчех атте пек тăрăшни сисĕнетчĕ."

1936 çулта ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕ тăрăх Чкалова парти ретне илнĕ. Чкалов ВКП(б) Центральный Комитетне çапла ыйту панă:

„Ленин—Сталин аслă партийĕн членне илме ыйтатăп.

Парти ĕçĕшĕн, çулпуçĕн, учителĕн—Сталин юлташăн директивисене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурăп.

„N0-25" командирĕ В. Чкалов."

Хасан кӳлли патĕнче япони самурайĕсемпе çапăçнă кунсенче Чкалов событи мĕнле аталанса пынине питĕ тимлĕн сăнаса тăнă та хăйĕн çывăх юлташĕсене, легендарлă экипаж членĕсене—Байдуковпа Белякова çапла каланă:

„Пирĕн хатĕр тăрас пулать. Эпир Инçет-Хĕвелтухăçĕнче кирек хăш самантра та кирлĕ пулăпăр".

Чкалов хамăр авиацие тĕреклетес шухăш-кăмăлпа пурăннă, тĕнчене тĕлĕнтерекен рекордсене пурне те хамăр çĕршыв ывăлĕсем çĕнсе илччĕр тесе пурăннă. Вăл çĕр чăмăрĕ тавра вĕçсе çаврăнма ĕмĕтленнĕ.

Вăл Совет Союзĕ авиациллĕ аслă держава пулса тăни çинчен, пирĕн летчиксем çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пыни çинчен мухтанса каланă. Эпир питĕ чаплă çĕршывра пурăнатпăр,— тенĕ Чкалов,—пирĕн çынсем, пирĕн Ленин—Сталин партийĕ питĕ чаплă. Пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар, геройла сталинла авиаци пур.

Совет патриочĕсем хăйне хисепленĕшĕн Чкалов калама çук хĕпĕртенĕ, вăл вара хăйĕн землякĕсене Горький суйлав округĕнче СССР Верховный Советне депутата суйламашкăн баллотировкăна тăма мăнаçланса тата савăнса килĕшӳ панă. Икĕ миллион та пилĕкçĕр пин суйлавçă ăна СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйланă.

Суйлавçăсем умĕнче сăмах тухса каланă чухне Чкалов çапла каланă:

„Хам юратакан тăван çĕршыв чапĕшĕн тата унăн питĕ паллă сывлăш флочĕн чапĕшĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме пулатăп. СССР Верховный Совет депутачĕн аслă ятне варалас мар, ленинла-сталинла çултан нихăçан та пăрăнса каяс мар, халăха, суйлавçăсене пăхăнса тăрасси çинчен нихăçан та манса каяс мар тесе, пĕтĕм вăя хума пулатăп.

Эпĕ хамăр çĕршывра халăх тăшманĕсемпе кĕрешĕп, ытах фашистла вăрçă чĕртсе яравçăсем пирĕн юратнă тăван çĕршыв çине тапăнма хăяççĕ пулсан, эпĕ боевой летчик-истребитель мĕн тери мастер иккенне кăтартăп. Шансах тăратăп, тăшмансем ун чух хăйсен куçĕсемпе курсах ĕненĕç: Совет çĕршывĕнче Чкаловсем, Громовсем, Байдуковсем тата Юмашевсем вĕсем шухăшланинчен темĕн чухлĕ нумайрах пулĕç".

„СССР Верховный Совет депутачĕн аслă ятне варалас мар" тесе тупа тунине Чкалов тӳркăмăлпа пурнăçларĕ. Горький об-

лăçĕнчи тата Чăваш республикинчи суйлавçăсем Чкалов юлташ хăйĕн суйлавçисемшĕн епле тăрăшнине тав туса аса илеççĕ.

Чкалов тăван çĕршывăн юратнă ывăлĕ, нумай миллионлă совет халăхĕн юратнă ывăлĕ пулнă. Халăх Чкалов çинчен нумай легендăсем, юмахсем тата юрăсем хунă.

Калама çук пысăк ӳсĕм тунă çын пулсан та, вăл хăйне пысăка хуман, малтанхи пек Валериех, хăйĕн тусĕсем чĕннĕ пек „Вальках" пулнă.

Унăн хаваслă сăн-сăпачĕ, ăмăрткайăк куçĕсем пек çиçсе тăракан куçĕсем, сарлака çамки, вăйлă сăмси, лайăххăн палăрса тăракан тути тата вăйлă янахĕ—çаксем пурте унра пысăк вăй пуррине палăртса тăнă, унпа калаçакансене ун çине тимлĕн пăхтарнă. Калаçнă чух вăл питĕ тӳррĕн калаçнă, тӳрĕ калаçнишĕн никампа та кăмăлсăр пулман. Çынсем ун патне канаш е пулăшу ыйтма пырсан, вĕсем вăл ăшшăн калаçнине туйса тăнă.

Тул енчен пăхма кăшт лутакарахскер, вăл уçă чĕреллĕ çын пулнă, питĕ аван юлташ тата çемьере питĕ аван çын пулнă.

Чкалова совет ачисем питĕ юратнă, вăл хăй те вĕсене юратнă. Чкалов патне ачасем, рабочисем, колхозниксем, служащисем, красноармеецсем питĕ нумай çырусем çырнă. Çаксем ĕнтĕ геройпа халăх хушшинче татăлми çыхăну пурри çинчен, халăх массисем ăна хытă юратни çинчен калаççĕ.

Кĕтмен çĕртен килсе тухнă инкек пирĕн вăхăтри аслă летчикăн геройла пурнăçне пĕтерчĕ.

Чкаловăн ятне, совет халăхĕ юратнă геройăн, сталинла авиацин чаплă соколĕн ятне совет халăхĕ сыпăкран сыпăка хăйĕн чĕринче тытса усрĕ, унăн сăн-сăпачĕ ĕмĕр-ĕмĕрех паттăрлăх, геройлăх, Ленин — Сталин партине чĕререн парăннин тĕслĕхĕ пулса тăрĕ.

Редактор перевода В. О. Алагер.

Подписано к печати 29/VIII-41 г.
НТ 5497. Зак. 255. Объем 1,75 п. л.
Тираж 3000 экз.

Типогр. № 1 Управл. изд. и полигр. при СНК ЧАССР.
г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

ОТК. 7

Цена 50 коп.

# ВЕЛИКИЙ ЛЕТЧИК НАШЕГО ВРЕМЕНИ

Биографический очерк

ГОСИЗДАТ ЧАССР
1 9 4 1